ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН САККУНЕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН УЙРĂМ САККУНЕСЕН АКЧЕСЕНЕ УЛШĂНУСЕМ КЕРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2023 çулхи юпа уйăхĕн 26-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Уйрăм категорири граждансене пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă пулăшу ĕçĕсемшĕн тӳлес енĕпе социалла пулăшу мерисем памалли йĕрке çинчен" 2009 çулхи юпа уйăхĕн 19-мĕшĕнчи 56 №-лĕ саккунĕн (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2009, 82, 83 №-сем; 2010, 85 №; 2011, 89 №; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2015, 12 №; "Республика" хаçат, 2021, ака уйăхĕн 30-мĕшĕ) 2^1 статйине улшăну кĕртес, ăна çакăн пек çырса хурас:

"2^1 статья. **Информацие патшалăхăн "Социалла сферăри пĕрлехи централизациленĕ цифра платформи" информаци системине вырнаçтарасси**

Çак Саккунăн 1 статйипе пăхса хăварнă уйрăм категорири граждансене социалла пулăшу мерисем пани çинчен калакан информацие патшалăхăн "Социалла сферăри пĕрлехи централизациленĕ цифра платформи" информаци системине вырнаçтараççĕ. Çавнашкал информацие патшалăхăн "Социалла сферăри пĕрлехи централизациленĕ цифра платформи" информаци системине вырнаçтарас тата асăннă информацие кăтартнă системăран илес ĕçе Федерацин "Патшалăхăн социалла пулăшăвĕ çинчен" 1999 çулхи утă уйăхĕн 17-мĕшĕнчи 178-ФЗ №-лĕ саккунĕпе килĕшӳллĕн туса пыраççĕ.".

2 статья

Чăваш Республикин "Ачаллă çемьесене патшалăх пулăшăвĕ памалли хушма мерăсем çинчен" 2012 çулхи нарăс уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 1 №-лĕ саккунне (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2012, 94 №; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2014, 3 №; 2015, 12 №; 2016, 11 №; "Республика" хаçат, 2017, раштав уйăхĕн 27-мĕшĕ; 2020, çу уйăхĕн 7-мĕшĕ; 2021, нарăс уйăхĕн 25-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 2-мĕшĕ; "право21.рф" сеть кăларăмĕ, 2022, чӳк уйăхĕн 22-мĕшĕ, 0000000000000249 №) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 3 статьян 6-мĕш пайне çакăн пек çырса хурас:

"6. Çемье капиталĕн укçи-тенкине хывни çинчен калакан информацие патшалăхăн "Социаллă сферăри пĕрлехи централизациленĕ цифра платформи" информаци системине вырнаçтараççĕ. Çавнашкал информацие патшалăхăн "Социаллă сферăри пĕрлехи централизациленĕ цифра платформи" информаци системине вырнаçтарас тата асăннă информацие кăтартнă системăран илес ĕçе Федерацин "Патшалăхăн социаллă пулăшăвĕ çинчен" 1999 çулхи утă уйăхĕн 17-мĕшĕнчи 178-ФЗ №-лĕ саккунĕпе килĕшӳллĕн туса пыраççĕ.";

2) 7 статьян 6-мĕш пайĕнче "Социаллă тивĕçтерĕвĕн пĕрлехи патшалăх информаци системипе" сăмахсене "патшалăхăн "Социаллă сферăри пĕрлехи централизациленĕ цифра платформи" информаци системипе" сăмахсемпе улăштарас.

3 статья

Чăваш Республикин "Çар çапăçăвĕсен инваличĕсене хушма тӳлев памалли йĕрке çинчен" 2012 çулхи çу уйăхĕн 10-мĕшĕнчи 23 №-лĕ саккунĕн (Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2012, 5 №; "Республика" хаçат, 2020, пуш уйăхĕн 11-мĕшĕ, авăн уйăхĕн 30-мĕшĕ; 2022, раштав уйăхĕн 28-мĕшĕ) 5^1 статйине улшăну кĕртес, ăна çакăн пек çырса хурас:

"5^1 статья. **Информацие патшалăхăн "Социаллă сферăри пĕрлехи централизациленĕ цифра платформи" информаци системине вырнаçтарасси**

Çар çапăçăвĕсен инваличĕсене çак Саккунпа килĕшӳллĕн хушма тӳлев памалла туни тата ăна уйăрса пани çинчен калакан информацие патшалăхăн "Социаллă сферăри пĕрлехи централизациленĕ цифра платформи" инфор-

маци системине вырнаçтараççĕ. Çавнашкал информацие патшалăхăн "Социаллă сферăри пĕрлехи централизациленĕ цифра платформи" информаци системине вырнаçтарас тата асăннă информацие кăтартнă системăран илес ĕçе Федерацин "Патшалăхăн социаллă пулăшăвĕ çинчен" 1999 çулхи утă уйăхĕн 17-мĕшĕнчи 178-ФЗ №-лĕ саккунĕпе килĕшӳллĕн туса пыраççĕ.".

4 статья

Чăваш Республикин "Нумай хваттерлĕ пурăнмалли çуртри пĕрлехи пурлăха тĕпрен юсама пухакан укçана тӳлес енĕпе уйрăм категорири гражданселе социаллă пулăшу парасси çинчен" 2016 çулхи ака уйăхĕн 8-мĕшĕнчи 14 №-лĕ саккунĕн (Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2016, 4 №; "Республика" хаçат, 2018, юпа уйăхĕн 24-мĕшĕ; 2019, авăн уйăхĕн 18-мĕшĕ; 2021, ака уйăхĕн 30-мĕшĕ) 3^1 статйине улшăну кĕртес, ăна çакăн пек çырса хурас:

"3^1 статья

Çак Саккунăн 1 статйинче кăтартнă гражданселе нумай хваттерлĕ пурăнмалли çуртри пĕрлехи пурлăха тĕпрен юсама пухакан укçана тӳленипе пулнă тăкакĕсене саплаштарни çинчен калакан информацие патшалăхăн "Социаллă сферăри пĕрлехи централизациленĕ цифра платформи" информаци системине вырнаçтараççĕ. Çавнашкал информацие патшалăхăн "Социаллă сферăри пĕрлехи централизациленĕ цифра платформи" информаци системине вырнаçтарас тата асăннă информацие кăтартнă системăран илес ĕçе Федерацин "Патшалăхăн социаллă пулăшăвĕ çинчен" 1999 çулхи утă уйăхĕн 17-мĕшĕнчи 178-ФЗ №-лĕ саккунĕпе килĕшӳллĕн туса пыраççĕ.".

5 статья

Çак Саккун 2024 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа вăя кĕрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ О. Николаев

Шупашкар хулли
2023 çулхи юпа уйăхĕн 27-мĕшĕ
79 №